Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

43 (7785) № * Шăмат кун, 2010 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 5-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Район уй-хирĕсенче

## Хресченшĕн тăхтав çук

Вăхăтăн чарăнусăр утăмĕпе пырса сисмесĕрех çуркуннерен çу кунĕсене куçрăмăр. Çавна май куç умĕнчех çурхи ака-суха ĕçĕсем акнă-ларнă культурăсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерессипе улшăнчĕç. Ĕнерхи е виçĕм кунхи пекех ял хуçалăх производство кооперативĕсенче е хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ĕçлекенсен кану çук. Вĕсем иртен пуçласа мĕн тĕттĕмччен хăйсен уй-хирĕсенче.

Ыранхи кунпа пурăнакансем паян уй-хирте çум курăкĕпе, ӳсен-тăран сăтăрçисемпе химиллĕ тата механизациллĕ майсемпе кĕрешеççĕ.

– Çĕр улми лартас ĕç вĕçленчĕ кăна – ретсенче çум курăкĕсем пуçĕсене çĕклерĕç. «Симĕс пушарпа» кĕрешессине малтанах хатĕрленнĕрен иртнĕ эрнерех çĕр улми речĕсене чĕрме-кăпкалатма тухрăмăр. Хамăршăн ĕçлетпĕр вĕт, – терĕ пĕчĕк кану вăхăтĕнче пирĕн çине йăл кулса пăхса Вениамин Яшков механизатор.





Вăл тытса пыракан МТЗ-82 паян С. Ягреевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче ĕçлет. «Иккĕмĕш çăкăр» лаптăкĕ кунта кăçал 80 гектар. Районĕпе илсен вара унăн калăпăшĕ 1541 гектар. Ретсем хушшине кăпкалатассине вара паянхи куна 700 гектара яхăн лаптăк çинче пурнăçланă. С. Ягреевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнчи çĕр улми лаптăкĕсенче çур аки пахалăхĕпе паллашма тухнă май районти агрономсен ушкăнĕ те пулса курчĕ.

Çур аки иртнерипе çеç лăпланса ларас марччĕ çав. «Симĕс пушар» тыр-пул анисене ан илентĕрччĕ. Ахальлĕн çур акире ыйхă вĕçтерсе тар тăкнин усси вичĕ пуслăха та пулмĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре: Вениамин Яшков механизатор çĕр улми пуссинчче.**

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Июнĕн 5-мĕшĕ – Тăван тавралăха хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун

### Чăваш Енĕн хисеплĕ экологĕсем, отрасль ветеранĕсем!

Сире профессиллĕ уявпа саламлатăп!

Хăвăр ĕçĕре чунпа парăннăскерсем, эсир Чăваш Енĕн чăнчăн патриочĕсем. Сирĕн тăрăшулăхпа экологи лару-тăравĕ шанчăклă алăра.

Вăхăт пирĕн ума çĕнĕрен те çĕнĕ тĕллевсем лартать. Сут çанталăка сыхласа хăварас тесен Чăваш Республикинче пурăнакан кашни çыннăн çĕнĕлле шутлама тытăнмалла. Çĕнĕ условисенче тăван тавралăх пирки кашни утăмра шутламасан майĕ те çук. Экологи – экономикăна аталантармалли ориентирăн тата политикăн тĕп никĕсĕ. РФ Правительствин пуçлăхĕ кăçалхи ака уйăхĕнче Шупашкарти шыв хранилищинчи шыв виçине 68 метра çити хăпартмалли проект ĕçĕсене вĕçлени пирки пĕлтерни уйрăм пĕлтерĕшлĕ. Йăлари хытă каяшсене пуçтармалли полигон хута яни те тавралăхри экологи лару-тăрăвне тĕпренех ырă енне улăштармалла.

Чăваш экологĕсем пухнă опыт, шанса тăратăп – пирĕн пĕрлехи тĕллевсене çывхартмалли çулсенчен пĕри. Эсир хăвăр ĕçе чунтан парăнса пурнăçланишĕн пысăк тав. Сире сывлăх, ăнăçу, телей пултăр!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Акатуй саламĕ

### Хисеплĕ ентешĕмĕрсем, ял ĕçченĕсем!

**Паян районта иртекен Акатуй – ĕçпе юрă тата спорт уявĕ – ячĕпе пурне те чун-чĕререн саламлатăп. Çурхи ака-суха ĕçĕсем вĕçленнĕ хыççăн кăçалхипе 57-мĕш хут иртет вăл. Кăçал ăна 1941-1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçăра Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул тата Чăваш автономине йĕркеленĕренпе 90 çул çитнине халаллатпăр. Тавах вăрçă ветеранĕсене, тăлăх арăмсене, тыл ĕçченĕсене, вăрçă ачисене пире таса тӳпе айĕнче мирлĕ ĕçре вăй хума, канма телейлĕ пурнăç туса панăшăн. Республика аталанăвĕнче те пирĕн Муркаш районĕн, унăн ĕçчен çыннисен тӳпи питĕ пысăк. Пурне те çуре çакăншăн тав тăватăп.**

**Кăçал та пулас тыр-пул никĕсне йĕркеллĕ хывса хăвартăмăр. Çакă механизаторсем, специалистсемпе хуçалăхсен ертӳçисем, пур ял ĕçченĕ тăрăшса вăй хунине кăтартса парать. Халĕ пирĕн тĕллев – акса-лартса хăварнă ял хуçалăх культурисене йĕркеллĕ пăхса çитĕнтересси. Çавăнпа та кашни хăйĕн тивĕçне малашне те чун-чĕре хушнă пек пурнăçласса шанас килет.**

**Хаклă çыннăмăрсем! Тавах сире район аталанăвĕшĕн ырми-канми ĕçленĕшĕн. Чăннипех хисепе тивĕç эсир. Пурне те уява тулли кăмăлпа иртерме ырлăх-сывлăх, телей сунатăп. Ĕçĕрсем малалла та ăнса пычччăр, çемйĕрсенче килĕшӳ пултăр. Сăн-питĕртен телей кулли ан кайтăр.**

**Ю. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

Райадминистрацире

### Тăрăшса вăй хунăшăн

Район администрацийĕн пуçлăхĕн майăн 31-мĕшĕнчи 430 № йышăнăвĕпе нумай çул ял хуçалăх производствинче тухăçлă ĕçленĕшĕн В.В. Горбунов хресчен (фермер) хуçалăхĕн механизаторне Юрий Леонидович Ильина район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Йыхрав

### Черетсĕр 41-мĕш лару

Депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 41 ларăвне июнĕн 9-мĕшĕнче 10 сехетре райадминистрацин ларусен залĕнче пухаççĕ.

Кун йĕрки:

1.Район Уставне улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси çинчен.

2.Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсене суйламалли округсен схемисене çирĕплетесси çинчен.

Хăвăрт утассипе

### Раççей ăмăртăвĕ – Шупашкарта

Июнĕн 12-13-мĕшĕсенче Шупашкарта хăвăрт утакансен Раççей ăмăртăвĕ иртет. Ăмăрту залив хĕррине тата «Олимпийский» стадионта пулать. Спорт уявне июнĕн 12-мĕшĕнче 16 сехет çурăра «Олимпийский» стадионта уçаççĕ.

Шупашкарти ăмăртусене пурне те пырса курма чĕнеççĕ.

Паян – районти Акатуй

## Пур ĕçе те – вăхăтра

Черетлĕ çур аки ĕçĕсем вĕçленнĕ май унта хутшăннă уй-хир ĕçченĕсене, механизаторсемпе водительсене, агрономи тата инженери службисен ĕçченĕсене, хуçалăхсен ертӳçисене ĕçсене вăхăтра тата май пур таран пахалăхлă пурнăçланăшăн тав тăватăп. Сирĕн ĕçри паттăрлăх хуçалăхăрсен пӳлмисене пысăк тухăçпа кĕрессе шанатăп.

### Уй-хирте

Районĕпе çурхи ака-суха ĕçĕсенче çĕр ĕçченĕ ял хуçалăх культурисене 14,6 пин гектар çинче акса-лартса хăварма мехел çитерчĕ. Вăл хисепрен 11 пин гектарне тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсем, 1541 гектарне çĕр улми, 1406 гектарне пĕр çул ӳсекен курăксем, 280 гектар силослăх культурăсем, 55 гектар пахча çимĕç йышăнчĕç. Пĕлтĕр 6752 гектар акса хăварнă кĕрхи культурăсенчен 3900 гектарне кĕçал çĕнĕрен акма тивни те çур аки калăпăшне пысăклатрĕ.

Çак ĕçсене пурнăçланипе пĕрлех çур акире çĕр ĕçченĕ кĕрхи культурăсене 2,7 пин, нумай çул ӳсекен курăксене 9,8 пин гектар çинче çӳрелесе, апатлантарса хăварчĕ.

Çĕнĕ шухăшлавпа ĕçлесе пыракансем паян çур акире акнă-лартнă культурăсене пăхса ӳстерессипе çанă тавăрса тимлеççĕ.

Çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче районти хуçалăхсен ертӳçисемпе, агроинженери службисен специалисчĕсемпе çур аки ĕçĕсене вырăнсене тухса хак парассипе иртертĕмĕр. Çур аки ĕçĕсене пĕтĕмĕшлĕ вăтам хак пама пулать пулсан та, Ильич яч. хис. (ертӳçи И. Николаев, агрономĕ Ф. Егоров), «Ударник» (П. Давыдов тата А. Васильев), Суворов яч. хис. (В. Андреев тата Г. Албутова), «Восток» (М. Шишокин), «Оринино» (Ю. Шишокин тата И. Блинова), Чкалов яч. хис. (П. Ефимов), «Свобода» (В. Ананьев тата А. Блинов), В. Горбуновпа А. Толстов хресчен (фермер) хуçалăхĕсенчи ĕç-хĕл ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать.

Уйрăм ĕçченсене илсен «Свобода» хуçалăхри Н. Максимов, «Передовикри» В. Соколов, «Ударникри» Л. Степанов, Чкалов яч. хис. хуçалăхри Э. Алексеев, Чапаев яч. хис. хуçалăхри Ю. Скворцов т. ыт. те уйрăм хисепе тивĕçлĕ.

Хресчен (фермер) хуçалăхĕсем вăй илни В. Бархаткин, С. Сретинский, И. Чернова хуçалăхĕсем урлă аван курăнать.

### Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ

Çĕр ĕçченĕ çур аки иртнерипе пĕрлех обществолла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарас тапхăр та хыçа юлчĕ. Иртнĕ çулхи кăрлач – ака уйăхĕсемпе танлаштарсан кăçал тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем 103,1 процент сĕт сунă, 95,7 процент аш-какай туса илнĕ. Сĕт сăвассипе Суворов яч. хис., «Герой», «Ударник», Ильич яч. хис. хуçалăхсем ăнăçлăрах ĕçлеççĕ. Суворов яч. хис. хуçалăхри майракаллă шултра выльăхсен талăксерен 1055 грамм, «Свободăпа» «Орининăра» 960-шер грамм, «Герой» тата Суворов яч. хис. хуçалăхсенчи самăртма хупнă сыснасем 549-540 грамм ӳт хушни те пирĕн хресчен пĕр вырăнта тăпăртатса тăманни пирки калать.

«Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» акционерлă общество производство культурине ӳстерсе пырса кăçалхи 5 уйăхра 24 миллион та 663 пин штук çăмарта илме пултарчĕ. Ку вăл пĕр чăх пуçне 135 çăмарта илние танлашать.

Май килнипе усă курса социаллă сферăра ĕçлекенсене те вĕсен тăрăшулăхĕшĕн тав тăвас килет.

Ялсен çĕнĕ ĕмĕрти пурнăç аталанăвĕ ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем çаврăнăçуллă пулнипе çыхăннă. Кунта манăн Н. Александрова (Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ), Н. Никитина (Муркаш), А. Лаптева (Мăн Сĕнтĕр), С. Иванова (Йӳçкасси) ырăпа палартас килет.

Ял пурнăçĕпе интересленекен, ял хуçалăх аталанăвне тӳпе хывакан кашни çынна пысăк тав. Сирĕн умăрта сулăрсем ялан усă пулччăр, сывлăхăр çирĕп пултăр!

**В. КАЛИНИН,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ,**
**ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.**

Çĕнĕ награда

## «Юратупа шанчăклăхшăн»



Республика çĕнĕ награда туса хунă - «Юратупа шанчăклăхшăн» орден. Ку орденпа пĕрле килĕштерсе 50 çултан кая мар пурăнакан, ачисене пăхса çитĕнтернĕ, сывă пурнăç йĕркине тытса пыракан, çемье институтне çирĕплетес тĕлĕшпе лайăх тĕслĕх кăтартакан мăшăрсене наградăлаççĕ.

Саламлатпăр



Чун-чĕререн юратнă мăшăра тата ыр пиллĕ аттепе хунъстарике, ăшă кăмăллă хăтана, ялан теветкел кукаçипе асаттене – Оринин ял тăрăхĕнчи Пиккикасси ялĕнче пурăнакан **Георгий Федорович ПРОКОПЬЕВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр.

Эсĕ пурришĕн эпир савăнатпăр, татах нумай нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, ихсĕлми телей сунатпăр. Тавах ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Яланах ăшшăн кĕтсе илсе тĕрĕс çулпа утма, ырă ĕçсем тума хавхалантарнăшăн сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр.

**Пысăк салампа: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, 3 мăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**

6 июня исполняется 50 лет со дня рождения дорогого нам всем человека – **Людмилы Александровны ВЕРХОВЦЕВОЙ.** Мы желаем ей бодрости духа, неиссякаемой энергии и выражаем искреннюю любовь.



Лебединою стаей куда-то
Улетают из жизни года,
И не будет им больше возврата,
Повторить их нельзя никогда.
Пусть сегодня звучат поздравленья,
Их так много, что хватит на век.
Так живи же, душой не старея,
Наш любимый, родной человек.

**С поздравлением семья Виноградовых**